# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

97 (7737) № * Шăмат кун, 2009 çулхи декабрĕн (раштав) 5-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Конкурс

## Раççейре – виççĕмĕш

***Раççей Федерацийĕнче çулленех муниципаллă пĕрлешӳсен конкурсĕнче мала тухнисене палăртаççĕ. Ăна тĕрлĕ йышши муниципаллă пĕрлешӳсем, РФ субъекчĕсен муниципаллă пĕрлешӳсен канашĕсем, муниципаллă пĕрлешӳсен пуçлăхĕсем, муниципаллă пĕрлешӳсен ĕç тăвакан органĕсен депутачĕсемпе муниципаллă служащисем, патшалăх служащийĕсем хушшинче ирттереççĕ.***

***Конкурс кăçал пĕтĕмпе 29 номинаципе иртнĕ. Унта пĕтĕмпе конкурс материалĕсем 1180 тăратнă. Муркаш районĕ «Муниципаллă районăн чи лайăх вырăнти администрацийĕ» номинацие хутшăнса, виççĕмĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă.***

***2009 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче конкурс çĕнтерӳçисене чысланă. Вăл Мускав хулинчи Предпринимательсен тĕп çуртĕнче иртнĕ. Церемоние Муркаш районĕн пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов тата район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Лилия Юрьевна Тарасова та хутшăннă. Конкурс йĕркелӳçисем район пуçлăхне Ю.А. Иванова диплом тата асăнмалăх парне панă.***

**Хамăр инф.**



Район пурнăçĕнчен

## Усăллă канашлу

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ йĕркеленипе иртнĕ юн кун, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕнче, район администрацийĕн ларусем ирттермелли залĕнче пахча çимĕç туса илессипе ĕçлес кăмăллисем валли вĕрентӳ-паллаштару семинарĕ иртрĕ.

– Сĕт, аш-какай, тырă-пулă та çĕр улми туса илсе тата çак ĕçсенче çĕнĕ технологисемпе усă курма пикенсе эпир пахча çимĕç туса илесси пирки самай манса кайрăмăр. Çакна çирĕплетекен хисеп: кăçал районти пур харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем пĕтĕмпе 50 гектар çинче пахча çимĕç туса илнĕ. Ку продукци епле сутăннине вара кашниех аван курса тăратпăр: тухăçĕ те пур унăн, тупăшĕ те, – терĕ семинара уçнă май район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Ананьев. Çакна зала пухăннисемпе тĕл пулса калаçни те çирĕплетрĕ. «Эпир çармăссенчен мĕнпе кая вара», – терĕç малашлăхра пахча çимĕç туса илессине мала кăларма шухăшлă агрономсемпе хуçалăх ертӳçисем, фермерсемпе килти хушма хуçалăхра пахча çимĕç туса илессипе пĕрремĕш кун мар ĕçлекенсем.

Семинара пухăннисене пахча çимĕç туса илес ĕçри пуçламăш утăмсемпе – вăрлăхсем суйлассипе – Чĕмпĕртен килнĕ ял хуçалăх наукисен кандидачĕ С. Ушин агроном ятарлă сайдпа кăтартса паллаштарчĕ, çак ĕçри кашни вăрттăнлăх çинче кĕскен чарăнса тăчĕ, хăйсен пĕрлешӳллĕ хуçалăхĕсене те, хресчен (фермер) хуçалăхĕсене те паха вăрлăхпа тивĕçтерме пултарни пирки пĕлтерчĕ.

Семинар хыççăн нумайăшĕ ăсчахпа тĕл пулса калаçма тăрăшни вĕрентӳллĕ тĕл пулу усăсăр иртменнине кăтартрĕ.

## Çамрăксем тата ял хуçалăхĕ

Район администрацийĕ ял хуçалăх пайĕпе маларах палăртнă пекех раштавăн 1-мĕшĕнче Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче вĕренекенсем Муркаш хĕрĕкаччисемпе тĕл пулчĕç. Муркаш районĕн аталанăвĕ çинчен район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Ананьев каласа пачĕ, хамăр енри çĕнĕлĕхсемпе паллаштарчĕ, вĕсене малалла аталантарма çамрăксен вăйĕ кирлине палăртрĕ.

Муркаш район делегацийĕнче çавăн пекех «Ударник» хуçалăх ертӳçи П. Давыдов, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин директорĕ Н. Ванеркин, «Оринино» тата Чапаев яч. хис. хуçалăхсен председателĕсем Ю. Шишокинпа И. Захаров, В. Бархаткин фермер, Юнкăпа Москакасси, Ярапайкассипе Ильинка тата Катькас ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, «Расна» эстрада ансамблĕ пулчĕç.

Паянхи куна Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче Муркаш каччисемпе хĕрĕсем куçăмлă майпа 107-ĕн, куçăмсăр майпа 70-ĕн вĕренеççĕ. Куçăмлă майпа вĕренекенсенчен 27-шĕ каялла таврăнмалла тĕллевлĕ вĕренме кайнăскерсем. Тĕл пулăва вĕсем пурте тенĕ пекех пынă. Вĕсемпе пĕрле актовăй зала çитнĕ ытти район хĕрĕсемпе каччисем те Муркаш ен аталанăвĕпе интересленнине кăтартрĕç. Вĕсем умĕнче тухса калаçнă ертӳçĕсем – П. Давыдов «Ударник» хуçалăха ертсе пырать, Н. Ванеркин «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикине малтуртăмлă аталантарать – хăйсем çамрăк специалистсене кĕтнине, вĕсене ĕçленĕ вăхăтрах наукăна производствăпа çыхăнтарса малалла аспирантурăра вĕренме майсем туса панине палăртрĕç. Вĕсен сăмахĕнче çĕр ĕçченĕн ĕçĕ палăрăмлă пулни, çамрăксене ял хуçалăхĕнче бизнес пуçлама çăмăл майсем пурри палăрчĕ. Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн М. Пушкинăн сăмахĕсем те çавнах çирĕплетрĕç. Паян районти ял тăрăхĕсен 16 пуçлăхĕнчен ытларахăшĕ тĕрлĕ çулсенче Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче пĕлӳ илнĕскерсем.

Пурнăçра хăйсем суйласа илнĕ пĕлӳпе ĕçлес текенсем валли районта вакансисем пур-ха. Ун пек вырăнсем – 24. Çакă çамрăксене тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тума пулăшасса шанас килет. Ял хуçалăх академийĕнчен 2009 çулта вĕренсе тухнă 11 çамрăкран 3-шĕ кăна («Передовикра» агроном, «Геройĕнче» зоотехник-селекционер, «Ударникра» агроном) районти ял хуçалăх предприятийĕсене вырнаçнă. Пĕлтĕр вара тивĕçлĕ пĕлӳ илнĕ хыççăн аслă вĕренӳ заведенийĕсенчен 5-ĕн, техникумсенчен 3-ĕн района таврăннăччĕ. Çак йыш çитес çулсенче татах ӳсессе шанас килет.

«Расна» ансамбль концерчĕ вара пуриншĕн те кăмăллă пулчĕ.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Саламлатпăр



Юратнă хаклă мăшăра, аттене, кукаçие – Пăсăрман ялĕнче пурăнакан **Виталий Алексеевич СОРОКИНА** 50 çул тултарнă ятпа саламлатпăр.

Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул, ĕмĕрӳ чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр. Мăшăру, ачусемпе мăнуксем, сывăх тăванусем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр. Пурнăçу яланах ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ тата мăнукĕ.**

Кармăш ялĕнче пурăнакан **Константин Порфирьевич КУЛЬКОВ** декабрĕн 5-мĕшĕнче 50 çул тултарать. Юбилей ячĕпе ăна ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Вăл Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче водитель пулса ĕçлет. Юбилей ячĕпе сана мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Эс пурришĕн эпир савăнатпăр. Сана саламласа вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, 3 хĕрĕ, 2 кĕрӳшĕ, ывăлĕ, 2 мăнукĕ, Кузнецовсен çемйи.**



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмаш ялĕнче пурăнакан, ĕç ĕмĕрне «Свобода» хуçалăхра ĕçлесе ирттернĕ, 4 ывăл çуратса ӳстернĕ хисеплĕ аттепе аннене, асаттепе асаннене тата ырă кăмăллă тăванăмăрсене **Таисия Афанасьевнапа Николай Никонович КАЛАШНИКОВСЕНЕ** ылтăн туй ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, татах нумай пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, 5 мăнукĕ, Огурцовсен, Осиповсен, Донсковсен, Федоровсен, Петуховсемпе Казаковсен çемйисем.**

Тӳрĕ эфир

## Премьер халăхпа калаçнă

Декабрĕн 3-мĕшĕнче Владимир Путин премьер-министр каллех тӳрĕ эфирта çынсен ыйтăвĕсем çине хуравланă. Ку ĕнтĕ саккăрмĕш тӳрĕ эфир.

Эфир пуçланиччченех çыхăнăвăн тĕрлĕ каналĕсемпе ун патне 1,6 миллион ыйту килнĕ. Калаçу вăхăтĕнче тĕрлĕрен ыйтусене çĕкленĕ. Çакна ăнланмалла та. Кусем вĕсем «Невский экспреспа» пулса иртнĕ трагеди те, çулталăк итогĕсемпе финанс кризисĕ те, терроризм та, Саяно-Шушенскри гидроэлектростанцири инкек те, ĕç укçин виçисем пĕчĕк пулни те, промышленноçри лару-тăру та, ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕсем т. ыт. те. Хальхи калаçăва рекордлă темелле: вăл 4 сехет те 2 минута тăсăлнă.

Ыр кăмăллăх марафонĕ

## Сирĕн пулăшăва кĕтеççĕ

Чăваш Енри ачасен фончĕ декабрь уйăхĕнче ыр кăмăллăх марафонĕ ирттерет. Вăл «Ачасен ячĕпе, ачасемшĕн» ятпа иртет. Йĕркелӳ комитечĕн сопредседателĕсем – Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров тата РФ Патшалăх Думин депутачĕ, халăхсем хушшинчи ĕçсен комитечĕн председателĕ Константин Косачев.

Чăваш Енри ачасен фончĕ ыр кăмăллăх акцийĕсене тăтăшах ирттерет. Вĕсен тĕллевĕ – ачасене йывăрлăхра пулăшасси, вăл шутра тивĕçлĕ медицина пулăшăвĕ илме те.

Йĕркелӳ комитечĕ тата район администрацийĕ эсир ачасен шăпинчен аякра юлмăр тесе шанаççĕ, сире марафона хутшăнма чĕнсе калаççĕ.

Пирĕн реквизитсем:
ИНН/КПП 2112001302/211201001
Наименование лицевого счета внебюджетный
Номер лицевого счета 06974120035
Финансовый отдел администрации Моргаушского района Чувашской Республики (Отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района)
Расчетный счет 40703810575143000018
Банк организации Чувашское ОСБ № 8613 г. Чебоксары
БИК 049706609
Корреспондентский счет 30101810300000000609
Назначение платежа 97430399050050000180 «Благотворительная помощь – марафон «Именем детства, во имя детства»

Кунпа пĕрлех çавна та каласа хăварасшăн. Кăçалтан тытăнса килтен тухмасăрах марафона хутшăнма май пур. Çавна валли «ВолгаТелеком» уçă акционер обществин талăкĕпех ĕçлекен нумай каналлă 8–809–707–69–19 номерĕ çине кăна шăнкăравламалла. Çак номерпе шăнкăравлакан Ача-пăча фондне 30 тенкĕ куçарса парать.

«ВолгаТелеком» уçă акционер обществинчен пĕлтернĕ тăрăх, ку номер çине килти телефонран кăна шăнкăравлама пулать (кĕсье тата служба телефонĕнчен шăнкăравлама май килмест). Енчен те эсир укçа хывас тетĕр пулсан, вăрăм сигнал пуласса кĕтсе илĕр. Автоинформатор сирĕн шăнкăрава йышăннине пĕлтерет. Пĕр хут шăнкăравлани 30 тенкĕ укçа куçарнипе танлашать. Татах куçарас тетĕр пулсан, татах шăнкăравлăр. Çын телефонпа усă курнăшăн счета унччченхи йĕркепе тӳленĕ хыççăн оператор взноса Ача-пăча фончĕ çине куçарса парать.

Граждансене йышăнаççĕ

## «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене 2009 çулхи декабрь уйăхĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнмалли график

| Хăш кун | Йышăнмалли вăхăт | Кам йышăнать |
| --- | --- | --- |
| Декабрĕн 8-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Лилия Юрьевна ТАРАСОВА**, политканаш секретарĕн çумĕ, район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ |
| Декабрĕн 11-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Платон Павлович ДАВЫДОВ**, политканаш секретарĕн çумĕ, «Ударник» сăнавпа производство хуçалăхĕн директорĕ |
| Декабрĕн 15-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Юрий Александрович ИВАНОВ**, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин вырăнти уйрăмĕн политканшĕн секретарĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ |
| Декабрĕн 18-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Виктор Александрович МОРОЗОВ**, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ |
| Декабрĕн 22-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ**, политканаш членĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ |
| Декабрĕн 25-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Владимир Аркадьевич КАЛИНИН**, партие майлисен канашĕн председателĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, «Муркашри сĕт-çу завочĕ» уçă акционер обществин директорĕ |
| Декабрĕн 29-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Игорь Васильевич НИКОЛАЕВ**, политканаш членĕ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ |